Хăй тытăмлăх ыйтăвĕсемпе

# “Вырăнсенче епле ĕçлениинчен нумай килет”

(Вĕçĕ. Пуçл 1-мĕш стр.).

**– Владимир Владимирович мĕн çинчен калани уйрăмах асра юлчĕ?**

– РФ Президенчĕ чи малтанах “Вырăнти самоуправление йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен” федераллă саккун вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен пĕлтерĕшне ӳстернине палăртрĕ. Паян муниципалитетсем патшалăх влаçĕн органĕсемпе пĕрле патшалăх шайĕнчи пур ыйтусене татса панă çĕре хутшăнаççĕ. Владимир Владимирович çавăн пекех наци проекчĕсем халăх пурнăçне лайăхлатма пулăшнине палăртрĕ. Вĕсене халăха меллĕ пултăр тесе пурнăçласси пирĕнтен нумай килнине палăртрĕ. Суйлав умĕнхи тапхăра кĕнĕ май паян вырăнти самоуправлени органĕсем çине тата та пысăк яваплăх тиенет, мĕншĕн тесен унăн пĕтĕмлетĕвĕнчен нумай килет малашне пирĕн çĕршыври саккун кăларакан тата ĕç тăвакан влаçсем камсенчен йĕркеленни.

– Вырăнти самоуправлени органĕсене право тата экономика тĕлĕшĕнчен çирĕплетесси – пирĕн пĕрлехи задача, - тесе палăртрĕ В.В. Путин.

**– Апла пулсан сире канăç паман ыйтусем те кун йĕркинчен пытанса юлман?**

– Çук, çук, пачах тепĕр майлă. Туса çитерейменни, йывăрлăхсене татса памалли çул-йĕр пирки уçă калаçу пулчĕ. Пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пыма пире муниципаллă йĕркелӳсен хăйсен тупăшĕ çитменнине пурте пĕлетпĕр. Кăна регионсенчен тухса калаçакансем те палăртрĕç. Владимир Владимирович çакна валли федераци шайĕнчен малашне укçа-тенкĕ ытларах куçарма шантарчĕ. Бюджетсем хушшинчи хутшăнусене йĕркелессипе Правительствăн хушма йышăнусем тумаллине палăртрĕ. Президент çавăн пекех вырăнта пуçарулăха ӳстермеллине палăртрĕ. Предпринимательствăна аталантармалла, мĕншĕн тесен паян вырăнти ял хуçалăх продукцине пуçтарса каякансен кĕсйине кĕрет ытларах тупăш, вырăнти бюджета нимĕн те юлмасть. Президент çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăласси те муниципалитет ирĕкĕнче пулнине, муниципаллă служащисене вĕрентсе хатĕрлес система туса хунине, унпа усă курмаллине палăртрĕ. Çавăн пекех пур шайри влаç органĕсен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени вырăнли пирки каларĕ.

Президент пирĕн ĕçе ăнланни курăнчĕ.

– Çĕршыври чи йывăр ĕç вăл – аялти сийре, сирĕн ĕç – чи йывăрри, терĕ. Шăпах влаçăн аялти пайĕнче влаçпа халăх куçа-куçăн тĕл пулать, сирĕн хăвăр аллăрпа çĕршыври йывăрлăхсене пĕтермелле. Çак йывăр задачăна пурнăçлама ăнăçу сунатăп, – терĕ.

**– Чăннипех те, паян кирек епле ыйтупа та вырăнти халăх сирĕн пата пырать. Халăха хумхантаракан ыйтусем вара нумай. Вĕсем пирки çак çӳллĕ шайри форумра мĕн палăртрĕç?**

–Чи малтанах çакна палăртас килет. Пирĕн çынсем йывăрлăхсене çӳлтен такамсем килсе татса парасса кĕтеççĕ, çакна хăнăхнă эпир ку таранччен. Çавăнпа та пирĕн пĕрремĕш тĕллев – халăхра пуçарулăха вăратасси.

Тухса калаçакансем çавăн пекех пĕчĕк комплектлă шкулсен шăпи пăшăрхантарни палăрчĕ. Ялсене сыхласа хăварасси, муниципалитетсен тăкакĕ тупăшпа шайлашса тăмаллине, муниципалитетсен пурлăх базине йĕрелени вырăнлине палăртрĕç. Тепĕр самант: Раççейĕн кашни регионĕнчи муниципалитетсем йĕркеллĕ ĕçлеччĕр тесен, наука, методика, ытти тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăни кирлĕ. Çавăн пекех Президента муниципалитетсен ĕçне ертсе пыма сĕнчĕç.

**– Президент тухса калаçакансен сĕнĕвĕсене шута илсе мĕн палăртрĕ?**

– Владимир Владимирович территорисен аталанăвĕн генпланĕсене тăвассипе ĕçлемеллине, çакна Федерацинче пуçлани вырăнлине палăртрĕ. Влаçăн федераллă органĕсен хăйсен мĕн ăçта вырнаçтармаллине хăйсен татса памалла, муниципалитетсене памалла, вара эсир çирĕппĕнех çак ĕçе вĕçлеме пултаратăр, тесе палăртрĕ. Ялсене сыхласа хăварассипе те пĕрле ĕçлемеллине палăртрĕ. Демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру лайăхланни те çакнах çирĕплетнине асăнчĕ. Тупăшран илекен налук пирки паян вăйра тăракан законодательство çав укçа-тенкĕн пайне муниципалитетсем валли хăварма регионсене хăйсене ирĕк пани пирки каларĕ. залра ларакансем хăйсем хушшинче шавласа кайсан, çапла палăртрĕ:

–Эпĕ çапла ăнланатăп. Федераллă законодательство çапла тума хушни сирĕншĕн вырăнлăрах пулать. Апла пулсан Правительствăна çакăн пек поручени пама шантаратăп.

Пĕчĕк комплектлă шкулсем пирки вара çакна палăртрĕ. Тĕрĕсех, 10-13 çултан ялтан кайнă ача унта юлассии иккĕленӳллĕ. Анчах та пĕчĕк шкулта ача тарăн пĕлӳ илеймесси те паллă. Ку проблемăна хăш-пĕр регионсенче урăхла татса пана: ача тăван ялтан ниçта каймасăрах пысăк шкулта тарăн пĕлӳ илет, çав пысăк шкула шкул автобусĕсем çӳреççĕ. Ялти шкултах пахалăхлă пĕлӳ илсе ачасем çĕршывăн аслă вĕренӳ заведенийĕсене йышлăн кĕнине палăртрĕ В.В. Путин. Кунта Чăваш Республикине асăнмарĕ пулин те, унăн халь çеç сăмахсенчен тата “учительсен çунакан” куçĕсем тeкен сăмахсенчен тӳрех пирĕн республика çинчен сăмах пыни паллă пулчĕ. Вăл регионсемпе муниципалитетсем калаçса татăлма пултарнине, çулсем тума пултарнине, автобуссем туянма пултарнине палăртрĕ. Мăнаçлантăм çакăнпа. Сăмах Чăваш Республики çинчен пыни тӳрех паллă.

Владимир Владимирович тепĕр хут бюджетсем хушшинчи хутшăнусене тӳрлетме шантарчĕ, çакă управлени ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма май панине палăртрĕ. Тухса калаçакансем вĕрентӳпе медицина пулăшăвĕн пахалăхĕ уксахлани пирки калани çинче чарăнас пулсассăн, кунта та йĕрке пулассине, хушма укçа-тенкĕ пулассине палăртрĕ. В. В. Путин тухса калаçакансем сĕннĕ пек муниципаллă шайри канаша Раççей Президенчĕ çумĕнче йĕркелеме, çав Канаш çумĕнче РФ Президенчĕ ертсе пыракан президиум йĕркелеме шантарчĕ.

**– Апла пулсан, малалла тăрăшас кăмăл пысăк сирĕн?**

– Урăхла пулма та пултараймасть. Халăх шаннă пулсан пире, халăхпа пĕрле хамăр пурнăçа хамăрăнах лайăхлатмалла. Çӳлтен те пулăшма шантарни татах та вăй-хал хушать. Хамăрăн ял тăрăхĕпе илес пулсан та, тумаллисем нумай. Исетерккĕ ялĕнче çул туса пĕтермелле. Ăна çырма урлă каçармаллин проекчĕ те хатĕр. Çавăн пекех Отарккăна çити çул тумалла. Шыв пăрăхĕсене улăштармалла. Ялсене тирпей-илем кĕртмелле. Çитес çул республика кунне пирĕн районта ирттерме палăртни пире татах та çӳлерех туртăнма хистет. Хамăр ял тăрăхĕнче пурăнакансемпе малашне те пĕрле çак ĕçсене туса ирттермелле пирĕн.

**– Тавах, Людмила Германовна, калаçушăн. Халăхпа пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма, пĕр тĕллевлĕн ĕçлеме ăнăçу сунатăп.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Мăн Сĕнтĕр шкулĕ 125 çулта

# Тăрăшуллă вĕрентекен

Таврари учительсене палламан çын çук та пулĕ. Пуçламăш классенчи вĕрентекенсем вара пурин асĕнче те ĕмĕрлĕхех юлаççĕ. Мĕншĕн тесен йăлтах пуçламăш класран пуçланатьçке.



Пирĕн тăрăхшăн вара Ольга Моисеевна Васильева чăннипех те сумлă çын шутланать. Вăл вĕрентсе, ăс-тăн парса 5 класпа сывпуллашрĕ. Халĕ вĕрентекен класра пĕрремĕш тапхăртисен ачисем те пур. Пирĕн пурнăçра наци проекчĕсем вăй илсех пыраççĕ. Çавна май “çемье тухтăрĕ” ăнлавпа та тăтăшах усă куратпăр. Пирĕн коллективра вара “çемье вĕрентекенĕ” те пур. Унпа эпир чăннипех мăнаçланатпăр. Тин çеç парта хушшине килсе ларнăскерсене вулама, çырма, пурнăçри пĕрремĕш утăмĕсене хăнăхтарма мĕн чухлĕ вăй-хал, чăтăмлăх, ăсталăх кирлĕ-çке. Кайран çав ачасемех инженерсем, врачсем тата ытти пысăк специалистсем пулса тăраççĕ.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче çирĕм виçĕ çул вăй хурать Ольга Моисеевна. Унăн тăрăшулăхне чылай Хисеп хучĕсем çирĕплетеççĕ. Вăл Чăваш Республикин Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ. Кăçал вара унăн пултарулăхне Раççей Федерацийĕн Хисеп грамотипе хакларĕç.

Ольга Моисеевна Етĕрне тăрăхĕнче çуралнă. Ачаллах Мăн Сĕнтĕрти тăванĕ патĕнче чылай пурăннă. Çакăнтах шкула çӳренĕ. Пĕчĕккĕллех анлă тавракурăмлă пулнипе палăрнă. Унăн тăванĕ, Ольга Лукинична, çак шкултах пуçламăш классене вĕрентнĕ. Мĕн пур ырă ене ачасене пама тăрăшнă.

Ольга Моисеевна ĕç ĕмĕрне Сĕнтĕрти техника юсавĕн предприятийĕнче пуçланă. Çав вăхăтрах куçăмсăр майпа физикăпа математика факультетĕнче ăсне туптать. Вăхăт малаллах шăвать, унăн ывăл çуралать. Паллах, çăмăлах пулман ăна. Яваплăха туяканскер малаллах талпăнать. Унăн ĕçри опычĕ те ӳссех пырать. Ольга Моисеевна урокĕсем хăйне май интереслĕ иртеççĕ. Ачасен тавракурăмне анлăлатассишĕн, вĕсене тарăн пĕлӳ парассишĕн ырми-канми тăрăшать вĕрентекен. Урок сехечĕсенче вăл çĕнĕрен те çĕнĕ меслетсемпе усă курать. Кашни ачапа тĕплĕн ĕçлеме тăрăшать. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе те тăтăшах калаçусем ирттерет. Унăн ĕç опычĕ чылайăшĕшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Пултаруллă вĕрентекенĕн ăсталăхне “Вĕрентекен – 2007” конкурсра тивĕçлипех хакларĕç. “Вĕрентекенсен вĕрентекенĕ” номинацире Ольга Моисеевна çĕнтерӳçĕ пулчĕ.

Çавăн пек пултаруллă вĕрентекенсем ĕçлеççĕ пирĕн шкулта. Чылай чухне ырă тĕслĕхе аякра шырама хăнăхнă эпир. Кунта вара аякка каймалла та мар. Ахальтен каламан ĕнтĕ пĕр поэт: “Раççей вĕрентекенсемпе чапа тухать, унăн чапне вĕренекенсем çӳле çĕклеççĕ”, – тесе. Малашне те çаплах пултăрччĕ.

**Е. ГУНИНА.**

Паллă ентешĕмĕре халалланă наукăпа практика конференцийĕнчен

# Петр Григорьев ячĕ манăçмĕ

Пирĕн районта хамăрăн паллă ентешĕмĕрсене халалласа тĕрлĕ мероприяти ирттересси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Çак ырă йĕркене пăхăнса районта кăçал Александра Назаровна Лазарева çуралнăранпа 90 çул, Тимухха Хĕветĕрĕ çуралнăранпа 120 çул, Куçма Пайраш çуралнăранпа 100 çул çитнине паллă турăмăр.

Юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче чăвашсен истори наукин аталанăвĕнче паллă йĕр хăварнă ентешĕмĕр, паллă историк, истори наукисен кандидачĕ, доценчĕ, Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Кĕртекасси ялĕнче кун çути курнă П. Г. Григорьев çуралнăранпа 110 çул çитнине халалласа наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ.

Конференцие Чăваш Патшалăх гуманитари наукисен институчĕн ĕçченĕсем, районти истори учителĕсем тата тăван ен культурине вĕрентекенсем, библиотекарьсем, Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул ачисем хутшăнчĕç.

Конференцие хутшăнакансем малтанах, программăпа килĕшӳллĕн, П.Г. Григорьевăн ал çырăвĕсемпе тата унăн кĕнекисемпе паллашрĕç, Муркаш районĕнчи паллă çынсене халалланă кĕнеке выставкипе интересленчĕç, Н. В. Никольский музейне çитсе курчĕç.

Конференцие Муркаш район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов уçрĕ, пурне те П. Г. Григорьевăн çуралнă кунĕ ячĕпе пĕрле пухăннăшăн саламларĕ, малашне те Чăваш Ен, тăван район историне тĕпчеме ырлăх-сывлăх, телей сунчĕ. Шкулсенче тăван енĕн кун-çулне, паллă çынсен ĕçне-хĕлне вĕрентессине вăйлатма сĕнчĕ.

Конференцие малалла тăсса район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Е. Андреева Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн ĕçченĕсене сăмах пачĕ.

Истори наукисен кандидачĕ, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн аслă наука сотрудникĕ Евгений Петрович Погодин, И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институчĕн пĕтĕмĕшле истори кафедрин ертӳçи Евгений Витальевич Касимов, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн археологи пайĕн ертӳçи Евгений Петрович Михайлов, Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн истори пайĕн ертӳçи Владимир Николаевич Клементьев тунă докладсенчен конференцие хутшăнакансем П. Г. Григорьевăн пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе, наукăри ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллашрĕç.

Конференцире районти истори учителĕсем Евгений Евстафьевич Ерагин, Владислав Иванович Тихонов хăйсем хатĕрленĕ докладсемпе паллаштарчĕç.

Вырăнти сумлă краевед Николай Пантелеймонович Пантелеймонов Петр Григорьевич Григорьева çывăх пĕлнĕ, унăн несĕлĕсемпе интересленнĕ. Николай Пантелеймонович Григорьевсен çемйин несĕл йывăçĕпе, аса илӳсемпе паллаштарчĕ.

Мероприятие хутшăнакансене Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул вĕренекенĕсем тăван ене, тăван халăха, паллă ентешсене халалланă сăвăсемпе паллаштарчĕç, юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

Конференцие вĕçленĕ май мероприятие хутшăнакансем çакăн пек пĕтĕмлетӳсем турĕç:

- шкулсенче П. Г. Григорьевăн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне вĕрентессине вăйлатмалла;
- П. Г. Григорьев çуралнă çурт çине асăну хăми вырнаçтармалла;
- П. Г. Григорьев пурнăçĕпе пултарулăхне çутатакан материалсене пухса кĕнеке кăлармалла;
- паллă ентешĕмĕрĕн тăванĕсемпе çыхăну йĕркелемелле, П. Г. Григорьевăн япалисене, документĕсене пухса Н. В. Никольский музейĕнче экспозици йĕркелемелле;
- Петр Григорьевича паллакă, пĕлнĕ, ас тунă çынсен, тăванĕсен аса илĕвĕсен пуххине йĕркелемелле.

Наукăпа практика конференцийĕ вĕçленсен пуххăннисем Петр Григорьевич çуралнă çурта çитсе курчĕç. Хăнасене П. Г. Григорьевăн тăванĕ Зоя Ивановна Еремеева тарават кĕтсе илчĕ. Зоя Ивановна Еремеева, Татьяна Павловна Васильева хăйсен тăванĕ çинчен питĕ интереслĕ каласа пачĕç, уява йĕркелекенсене, пухăннисене пурне те чунтан тав турĕç.

Районта паллă ентешсене халалласа ирттернĕ мероприятисем тăван ене, тăван кĕтесе тата та ытларах юратма вĕрентеççĕ, патриотизм туйăмне вăйлатаççĕ.

Районти паллă çынсене халалланă уявсене ачасем яланах активлă хутшăнаççĕ. Çамрăк ăру аслисенчен вĕренсе малалла çирĕп аталанасса, хăйсен умне лартнă тĕллевсене пурнăçласса шанатпăр, пирĕн районта тĕнчипе паллă çынсен йышĕ ӳсессе ĕненетпĕр.

**Н. ЕГОРОВА,**
**культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн информаципе методика центрĕн методисчĕ.**

Официально

Утвержден решением Моргаушской территориальной избирательной комиссии от 31.10.2007 г. № 21/1

**ГРАФИК**
**встреч политических партий, зарегистрировавших федеральные списки кандидатов в депутаты Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации пятого созыва, с избирателями Моргаушского района.**
**Время проведения встреч с 15 часов до 16 часов 30 минут**

| Место проведения встреч | | Политические партии | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Совместные встречи | «Аграрная партия России» | «Гражданская сила» | «Демократическая партия» | «Единая Россия» | КПРФ | ЛДПР | Партия социальной справедливости | Патриоты России | «Справедливая Россия» | СПС | «Яблоко» |
| Районный Дом культуры | 27.11 | 03.11 | | | | | | | | | | |
| Васькинский СДК | | | 04.11 | | | | | | | 26.11 | | |
| Б.Сундырский СДК | 23.11 | | | 05.11 | | | | | | | | |
| Тренькинский СДК | | | | | 06.11 | | | | 28.11 | | | |
| Шатракасинский СДК | | | | | | 07.11 | | | | | | |
| Москакасинский СДК | 20.11 | | | | | | 08.11 | | | | | |
| Оринински СДК | | | | | | | | 10.11 | | | | |
| Кашмашский СДК | 16.11 | | | | | | | | 11.11 | | | |
| Тораевский СДК | 13.11 | | | | | | | | | 12.11 | | |
| Тойгильдинский СДК | | | | | | | | | | | 14.11 | |
| Чуманкасинский СДК | | | | | | | 24.11 | | | | | 15.11 |
| Шатьмапосинский СДК | | 17.11 | | | | | | 25.11 | | | | |
| Юнгинский СДК | | | 18.11 | | | | | | | | | |
| Юськасинский СДК | 09.11 | | | 19.11 | | | | | | | | |
| Ярабайкасинский СДК | | | | | 21.11 | | | | | | 29.11 | |
| Ярославский СДК | | | | | | 22.11 | | | | | | 30.11 |